34-38

А. Захаров

Хакĕ 25 пус.

# Траххом тата унпа кĕрешесси

1934 Самар—Мускав

А. П. ЗАХАРӐВ ДОКТӐР

# ТРАХХОМ
## ТАТА
## УНПА КӖРЕШЕССИ

ВӐТАМ АТӐЛ КРАЙӖНЧИ
ПАТШАЛӐХ ИЗДАТӖЛСТВИ
Самар Мускав

## ТУПМАЛЛИ

Стр.

Куç чирĕсемпе суккăрлăх çинчен . . . . . . . . . . . . 3
Куçăн анатомипе физиологийĕ . . . . . . . . . . . . . 8
Чăвашсем хушшинче трахомлăх мĕншĕн пысăк . . . . . . 15
Трахом чирĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 19
Трахом пĕр-пĕрне йепле йерет . . . . . . . . . . . . . 25
Трахом йерсен мĕн тумалла . . . . . . . . . . . . . . 33
Трахом ĕçхалăхне мĕнле сийен кÿрет . . . . . . . . . . 38
Трахомпа йепле кĕрешмелле . . . . . . . . . . . . . . 40
Трахома тĕп тăвассишĕн . . . . . . . . . . . . . . . . 45

А. П. Захаров

Трахома и борьба с ней

Средневолжское краевое государственное издательство, Самара 1934 г.

Ответ. редактор В. З. Иванов. Техред. Ив. Смирнов

Сдано в набор 21/XI—33 г. Подписано к печ. 16/I—34 г. Форм. 62×94/32.
Тир. 3000. Изд. л. 1½. Бум. л. ¾. Печ. зн. в бум. листе 99280.

ОГИЗ № 2180. Инд. VI-Эк-бн. Уполном. крайлито № Г—1609.

Тип. ОГИЗа им. Мяги треста Полиграфкнига. Зак. № 2092

## Куç чирĕсемпе суккăрлăх çинчен

Паллах ĕнтĕ, суккăрланнă етем таврари пурнăçа куçпа кураймаст̆. Етем суккăра йулсан таврари çут-çанталăка та, социализăм строиттĕлствин историллĕ çитĕнӳсене те, йал социализăмланса хăйĕн тĕсне улăштарса пынине те, хула малалла ӳсĕмленсе çĕнĕ çуртсемпе, çĕнĕ урамсемпе, асфаљтлă тротуарсемпе чечекленсе пынине те, çĕнĕ заводсене, трамвайсене, пароходсене, паровозсене, самољотсене, стратостатсене тата ыттисене те вара куçпа курса савăнаймаст̆.

Кунран пуçне суккăрланнă етемĕн пурнăçĕ йапăхланат̆. Ăна хăйне пурăнмалăх ĕç лесе илме питĕ йăвăр пулат̆.

Ăна тăрантарса усрас ĕç вара, йе çемйе çине, йе патшалăх çине ӳкет. Суккăрланнă етем обчĕсţва кирлĕ таран усă параймаст̆.

Куç вăл етемĕн питĕ хаклă, питĕ кирлĕ оргăнĕ. Çак, питĕ хаклă, нимĕнпе те улăштар-

ма май çук орган—куç, тĕрлĕ чирпе чирлеме пултарать. Куç пăсăлни кăшт паларсанах, ăна вăхăтра лайăх тăрăшса тӳрлетмесен, вăл суккăр пулса ларма та пултарать. Куçа суккăр тăвакан чирсем питĕ нумай. Вăл чирсенчен чи хăрушăраххи—траххом йатлă чир. Çав чир Совет сойузĕнче пурăнакан вак халăхсем хушшинче пуринчен те нумай сарăлнă. Траххомпа чирленисем кашни 100 çын пуçне чăвашсем хушшинче 50—60 çын, мăкшăсем хушшинче—30—40 çын, тутарсем хушшинче—20—30 çын тивет. Анчах çак халăхсем хушшинче те траххом пур çĕрте те пĕр пек сарăлман. Вăтам Атăл крайĕнчи Кушкă районĕнчи чăвашсем 49 проц. мăкшăсем—28% траххомлă. Сорочинск районĕнчи хăш-пĕр йалта чăвашсем 64%, мăкшăсем—61% трахомлисем пур. Клевлĕ районĕнчи чăвашсем 50—60%, мăкшăсем—49%, тутарсем—24-35% трахомлă.

Çак тĕслĕхсене пăхсан, епĕр пĕр халăх хушшинчех траххом пĕр йалта нумайтараххине, тепĕр йалта сахалтарах сарăлнине куратпăр.

Хаш-пĕр чăваш йалĕсенче трахомсăр çемйесем ик-виç килĕ кăна. Вак халăхсем хушшинче пурнакан вырăссем те трахомли-

сем чылай. Хăш йалта вырăссем хушшинче траххомлисем 5-6% ҫитеҫҫĕ, хăшĕнче—10%. Вырăс хушшинче те траххомлисем 20% ҫитекен йалсем те пур. Ҫапах та, вырăс хушшинче траххом вак халăхсем хушинчи пек нумай сарăлман. Мускав облăҫĕнчи халăхсем хушшинче траххом ҫукпа пĕрех. Трахxом чирĕпе чирлесе суккăрланса йулнисем питĕ нумай. Пирĕн патшалăхра суккăр ҫынсем хушшинче траххомпа суккăрланнисем 21%, чеччепе (чечек) суккăрланнисем—12%. Чăваш республикĕнче траххом чирĕпе суккăрланнисем 62 процент. Епĕ пĕр пĕчек йалта (Кушкă районĕнче) икĕ куҫĕпе те суккăрланнисене 19 ҫын тупрăм. Вĕсенчен 18 ҫын траххомпа чирлесе суккăрланнă. Вак халăхсем куҫ чирĕпе кăна мар, суккăрлăхпа та пуринчен ытла аптраҫҫĕ. Вăтам Атăл крайĕнче 1926-мĕш ҫулхи переппис тăрăх чăвашсем хушшинче кашни 10 000 ҫынран 73 ҫын суккăрри пулнă, тутарсем хушшинче—39, мăкшăсем хушшинче—29, вырăссем хушшинче—12, украинцăсем хушшинче—9, казаксем (кăркăссем) хушшинче—11. Пĕтĕм Совет Сойузĕнче пурăнакан халăха пĕрле хисеплесен, вĕсен хушшинче 10 000 ҫын пуҫне суккăрри 16 ҫын пулни курăнать.

Йут патшалăхсенчи уччонисем култтурлă, таса пурăнакан халăх хушшинче кашни 10 000 çын пуçне 6 суккăр çын, вăтамлă таса пурăнакан халăх хушшинче 10 000 çын пуçне 10 суккăр çын, таса мар пурăнакан халăх хушшинче 10 000 çын пуçне 15 суккăр çын, медицинăн пулăшăвĕ çук, тасалăх çук çĕрте 10 000 çынна 25 суккăр çын пулма пултарать теççĕ.

Епĕр хал, колхозла пурлăхлă култтурлă пурăнăç çитĕнсе пынă вăхăтра, епĕр çак цыфăрсем çине пăхса тăма пултараймастпăр. Пирĕн задач—колхозла пурлăхлă, култтурлă йалта траххом чирĕпе аптраса суккăра йуласси̇не пĕтĕмпе тĕп тăвасси, суккăрлăха ĕмĕрлĕхех пĕтересси. Çак задача епĕр, партти йертсе пынипе, пурнăçа кĕртĕпĕрех.

Чылай колхозсем кăçалах пурлăхлă пурнăç çулĕ çине тухрĕç. Халĕ пĕтĕм крайĕпе колхозла култпоход пуçланчĕ. Култпоходăн задачĕсем хушшине куç чирĕсемпе кĕрешессине те кĕртес пулать. Хал ĕнтĕ пирĕн суккăрлăха хирĕç татăклăнах похода`тухас пулать.

Аçта чечче кастарас ĕçе талккĕшĕпех туса ирттернĕ, унта чеччерен суккăра йулнисем çукпа пĕрех. Аçта чечче кастарасси

пулман—унта чеччерен суккăрланнисем нумай пулнă.

Германи патшалăхĕнче чечче кастармалли закон тухаччен кашни 100 суккăр çын пуçне 35 çын чеччерен суккăрланнисем пулнă. Чечче кастармалли закон тухнă хыççăн, кашни 100 суккăр çын пуçне 2 çын чеччерен суккăрланнисем кăна пулнă.

Пирĕн пурин те ачасене пĕчĕкренех чечче кастарма тăрăшмалла. Чечче кастарас мар текенсене хирĕç кĕрешмелле.

Тата триппĕр, çифилис тейекен чирсенчен те нумай çын суккăр пулса йулаççĕ. Çак чирсенчен вăхăтра тӳрлетсен нумай çынсем суккăр пулса йуласран хăтăлмалла.

Çапла вара суккăрлăх ĕнтĕ нумай чухне хамăртанах килет. Совет сойузĕнче мĕн пурĕ суккăррисен шучĕ 500 000 çынна йахăн хисепленет. Вĕсенчен 300 000 çын куçĕсене вăхăтра тӳрлетнĕ, хăйсем таса пурăннă пулсан, куçпа çӳремелли çынсем пулнă. Çавăнпа пирĕн суккăрлăха хирĕç кĕрешес тесен, таса, культтурлă пурăнма тăрăшмалла, чирлесессĕн чирсене вăхăтра емеллемелле, халĕхи колхозла пурнăçа чăнахах пурлăхлă, культтурлă пурнăç тăвасшăн кĕрешмелле.

# Куҫӑн анатомипе физиологийӗ

Хуттө мӗнле йапалапа, хуттө мӗнле машшинӑпа лайӑх, пӗлсе ӗҫлес тесен, пирӗн йапалан, машшинӑн таврашсене, вӗсене мӗнле тыткаламаллине пӗлес пулать. Ҫаксене пӗлмесессӗн, машшинӑ час ӗҫлеме чарӑнать йе




1-мӗш ӳк. Ҫынӑн куҫулмине тӑрӑхла май ҫурмаран касса кӑтартни: 1—шурӑ витӗм; 2—мӑйрака витӗм; 3—сосудистӑй витӗм; 4—асамат витӗм; 5—Цилиарла ӳт; 6—чӗнтӗрлӗ витӗм; 7—куракан нервӑ тымарӗ; 8—куҫ шӑрҫи; 9—хрусталик; 10—кӗленче пек ӳт; 11, 11—куҫӑн мускулӗсем.

ҫӗмӗрӗлсе йурӑхсӑра тухма та пултарать. Ҫав машшинӑна тӳрлетсе йама, унӑн таврашӗсене лайӑх пӗлекен ҫын кӑна пултарать. Пи-

рĕн те куҫа сыхлас тесен, ăна тĕрлĕ чирсем ан йерччĕр тесен, куҫ таврашĕсене тата куҫ чирĕсене лайăх пĕлес пулаҭ. Ҫавсене пурне те пĕлсе тăрсан епĕр те куҫа тĕрлĕ чирсенчен сыхласа тăма пултарăттăмăрччĕ, пирĕн хушшăмăрта суккăр ҫын та сахал пулĕччĕ.

Куҫ улми,—ҫапҫаврашкаскер. Вăл тĕрлĕ йапаласем, ҫапăсем лексе сийенлесрен, шăмăри лупашкара выртаҭ. Ҫав лупашкана вырăсла орбиттă тесе калаҫҫĕ. Куҫа ҫутă кĕме орбиттăн мал йенĕ кăна уҫă. Кунта та куҫхупаххи тĕрлĕ йапаласем, ҫапăсем куҫа лекесрен, кирлĕ вăхăтра хупланса, куҫа тĕрлĕ инкекрен сыхласа тăраҭ. Алăпа куҫ умĕнче сулсанах, куҫ хупаххи куҫа хупласа илет. Куҫ ҫине пĕрмайах тĕрлĕ тусансем, хăйăрсем, ҫўпĕсем ларaҫҫĕ. Куҫ хупаххи пĕрмайах уҫкаланса-хупкаланса куҫа ҫавсенчен тасатса тăраҭ. Куҫ хупаххи хупкаланни тата куҫ улмине йалан куҫуллентерсе, ăна ҫуса тăраҭ.

Куҫҫулне, гљандуљă (вырăсла железа) тейекен ўт кăларса тăраҭ. Ҫав куҫҫулĕ гљандуљĕ орбиттăн ҫўлтипе тул йенчи ҫтени ҫумĕнче выртаҭ. Гландуљтен, 5-6 пĕчĕкҫеҫҫĕ каналсемпе куҫхупаххин шал йенне куҫҫул

йухса тухаӗ. Вара куççул—мал йенчи куç улмине, шал йенчи куçхупаххине йӗпетсе, куçхупаххисен шал йенчи кӗтессине пуçтарӑнаӗ. Çав вырӑна куççул кӳлли теççӗ. Куççул кӳлли тӗпӗнче шурӑллӑ хӗрлӗ мӑкӑлъ пур, ӑна куççул ашӗ теççӗ. Куççулӗ пӗрмайах çав кӳлӗре пухӑнса тӑмасӗ, вӑл малалла, каналпа йухса сӑмса ӑшне кайаӗ. Çав канал куçхупаххисем хӗрринчен, сӑмса йенчи кӗтессинчен, йӗп вӗçӗ пек пӗчӗк шӑтӑкпа пуçланса кайаӗ. Сӑмса ӑшне çав шӑтӑксенчен пӗчекçеççӗ каналсем кайаççӗ. Икӗ каналӗ, сӑмса шӑмми патне çитсен, пӗрлешеççӗ те, унтан вара айалалла шӑмӑ виттӗр пӗр канал пулса сӑмса йенне кайаççӗ. Икӗ канал пӗрлешнӗ вырӑна, куççул мӑйӑхӗ (мишекӗ) теççӗ. Куça çӳпӗ кӗрсен, йе çын макӑрнӑ вӑхӑтра глъандулӗ нумай куççул кӑлараӗ. Çавӑн чухне куççулӗ сӑмсана кайса ӗлкӗреймесен, пит çине йухса анаӗ. Вара ӑна куççулӗ йухаӗ теççӗ. Куççул пит çине йухса анни канал питӗрӗннӗрен те пулма пултараӗ. Куç хупаххин шал йенӗ чирлӗ мар пулсан, питӗ йака, çутӑ пулаӗ, йалан нӳрленсе тӑраӗ. Çавӑнпа ӑна мима (нӑйма) витӗм (слизистая оболочка) теççӗ. Куç хупаххин мима витӗмӗ таврӑнса хуç шуррине те

витет. Çавăнпа ăна (мима витĕмне) тата пĕрлештерекен витĕм тесе те калаççĕ. Куçхупаххин варринче куçхупаххин кăмăрчакĕ тата мускул (аш) тейекен ӳт пур. Мускул кĕскелнипе, вăрăмланнипе куçхупаххи хупăнать те, уçăлать те. Куçхупаххи хупăнмасан куç улми типет, унтан суккăр пулать. Çавăнпа йăвăр чирпе тăнсăрлансах выртакан çыннăн куçне йалан пăхса тăрас пулать. Куçĕ хупăнмасть пулсан, ăна чипер асăрханарах хупас пулать, куç мазĕпе сĕрес пулать. Çав йăвăр чирпе тăнсăр пулсах выртакан çынсене вăхăтра пулăшмасан, вĕсем нумайĕшĕ суккăр пулаççĕ.

Куç хупаххи хĕрринче куç хăрпăкĕ (тĕк) пур. Куç хăрпăкĕ малалла ӳсет, куçа тусанпа тар йе урăх мĕн те пулин кĕресрен лайăх сыхлать.

Куç улмин виçĕ витĕм хисепленет. Тулти витĕмĕн малти пайĕ пĕр тĕрлĕ, кайри пайĕ тепĕр тĕрлĕ. Кай йенчи пайне шурă витĕм теççĕ. Вăл питрех те питĕ, çутта хăйĕн ăшне кĕртмест. Малалла ку витĕм урăхланса таса кĕленче пек çап-çутă пулса тăрать. Ăна мăйрака витти (роговая оболочка) теççĕ. Мăйрака витĕмĕ пит таса, çутта хăйĕн ăшне кĕме пĕрре те чармасть. Тĕрлĕ чир

йернӗ вӑхӑтра мӑйрака витти, чӳрече кĕленчи тарланӑ пек тӗксӗмленме пултара̄т. Вара мӑйрака витти ҫутта куҫ ӑшне лайӑх кӗртмест, куҫ начар кура пуҫла̄т.

Куҫ шӑрҫин иккӗмӗш витӗмӗнче йун тымарӗсем (сосудсем) пит нумай, ҫыхакан, пӗрлештерекен ткаҥсем сахал. Ҫавӑнпа иккӗмӗш витӗме тымарлӑ витӗм (сосудистая оболочка) теҫҫӗ. Тымарлӑ витӗм виҫӗ пайа уйӑрла̄т. Кайри пайне тымарлӑ пайӗ теҫҫӗ, вӑтам пайа цилиарлӑ ӳт (цилирное тело) теҫҫӗ, малти пайа асамат витти (радужная оболочка) теҫҫӗ. Ҫав асамат витти тӗрлӗ ҫыннӑн тӗрлӗ тӗслӗ: хура, кӑвак тата ытти тӗслӗ те пула̄т. Асамат витти варринче ҫаврашка шӑтӑк пур, ӑна куҫ шӑрҫи (зрачек) теҫҫӗ. Куҫ шӑрҫи виттӗр куҫа ҫутӑ кӗрет. Куҫ шӑрҫи тӗттӗмре пысӑкланат̄, куҫ ӑшне нумайрах ҫутӑ кӗртме тӑрӑша̄т, ҫутӑра пӗчӗкленет, куҫа ытлашши ҫутӑ кӗрсе пӑсасран сыхла̄т. Куҫ шӑрҫи варринчи виҫҫӗмӗш витӗмӗ пит чечен ткаҥ. Ӑна чӗнтӗрлӗ витӗм тесе (сетчатая оболочка) калама йура̄т. Чӗнтӗрлӗ витӗмре нервӑсем нумай. Нервӑ тымарӗсем (волокна) ҫав тӗлрен пыракан, куракан нервӑ тымарне пуҫтарӑнаҫҫӗ. Вӑл тымар куҫ улминчен тухса орбиттӑ шӑмми виттӗр кӗрсе пуҫ мимине кайа̄т.

Куç улми варринче, куç шăрçи хыçĕнче йасмăк пек хрусталик (куç йасмăкĕ) пур. Вăл çап-çутă, çутта хăйĕн виттĕр кĕме чармасť. Çын çывăха пăхас тесен, хрусталик хулăмланаť, айакка пăхсан—çўхелет. Çавăнпа епир çывăхран та, айакран та лайăх куратпăр. Анчах çын 40 çултан иртсен, унăн куç хрусталикĕ лайăх хулăмланми пулаť. Çавăнпа ват çынсем çывăхран, куçлăх тăхăнмасан, лайăх курми пулаççĕ. Хрусталикрен хыçал йенелле куç улми кĕленче пек ўтпе (стекловидное тело) тулса тăраť. Вăл пĕçермен çăмарта шурри майлă. Çутта хăй виттĕр тухма, таса кĕленче пекех, пĕрре те чармасť.

Мăйрака витĕмĕпе асамат витĕмĕ хушшине малти пўлĕм теççĕ, асамат кĕперрипе хрусталик хушшинчине кайри пўлĕм теççĕ. Ик пўлĕмĕ те пĕр-пĕринпе куç шăрçи урлă хутшăнса, таса шыв пек йапалапа тулса тăраççĕ.

Лайăх куракан çыннăн куçĕ çине ўкекен йапала мĕлки мăйрака витĕмĕ, малти камĕр (пўлĕм) шывĕ, куç шăрçи, хрусталик тата кĕленче пек ўт виттĕр кĕрсе куç ăшне чĕнтĕр витĕмĕ çине ўкет, унтан вара вăл куракан нервă тăрăх пуç мимин ĕнсе патĕнчи

пайне кайаҭ. Ҫак сутӑ ҫулӗ пур йенчен те тӗрӗс пулсан, ҫын лайӑх кураҭ, ӑҫта та пулин ҫав ҫутӑ ҫулӗ сийенлӗ пулсан, ҫын лайӑх кураймасҭ, хӑш чухне суккӑрах пулса лараҭ. Куракан нервӑ тымарне кассан йе вӑл ытти чирпе пӑсӑлсан куҫ улми йепле тӗрӗс пулсан та—ҫын курмасҭ. Мӗнле телеграф пролӑкне кассан, аппарат тӗрӗс пулсан та телеграммӑ пама мэй ҫук, ҫавӑн пекех кунта та нервӑ пӑсӑлнипе куҫ аппарачӗ ӗҫлеми пулаҭ. Ҫавӑнпа, пӗлмен ҫынсем, хӑш-пӗр суккӑр ҫынна курсан, вӑл мӗншӗн курма пултарайманнинчен тӗлӗнеҫҫӗ: „Куҫӗ пӑхма тасах, вӑл курмастӑп тесе йури калаҭ пулӗ“ теҫҫӗ.

Мӑйрака витти-и, малти пӳлӗмри шыв-и, хрусталик-и, кӗленче пек ӳт-и тӗксӗмленсен, куҫ шӑрҫине шурӑ карса илсен, ҫав вӑхӑтрах куҫӑн ытти йапалисем тӗрӗс пулсан, ҫын ҫутта кураҭ, анчах йапаласене паллаймасҭ. Ку ӗнтӗ, тарланӑ чӳрече виттӗр пӑхсан, урамри йапаласене, ҫынсен мӗлкисене курса та вӗсене паллайманни пек пулса тӑраҭ.

Куҫ улми пӗр вырӑнта хускалмасӑр тӑмасҭ, вӑл йалан выҁаса тӑраҭ. Кашни куҫӑн ӑна выҁатса тӑма ултӑ мускул пур. Тул йенчи мускул туртӑнсан куҫ тул йенне кайаҭ.

Вăл лашана тилкепепе туртсан, вăл ăçталла туртнă унталла кайнă пекех пулса тăрат.

Кунтан çӳлерехре епĕр куç чирĕсенчен питрех усалли—траххом чирĕ тулса тăрат, тенĕччĕ. Çавăнпа та епĕр кунта траххом чирĕ мĕнле сийен кӳни çинчен уйрăмăнах пăхса тухăпăр.

## Чăвашсем хушшинче траххомлăх мĕншĕн пысăк

Траххом чирĕ авалтанах сарăлнă чир пулмалла. Пилĕк пин çула йахăн ĕлĕкрех сырнă сырусем çинче траххом чирĕ пек куç чирĕсем çинчен сырни пур. Çавăнпа уччонисем траххома авалхи чир теççĕ.

Траххом чирĕ ĕлĕк Йегипет текен çĕршывра питĕ нумай пулнă. Унтан вара арабсем, перçийцăсем пурăнакан çĕрсене сарăлнă.

Чăваш халăхĕ пĕр пин çула йахăн ĕлĕк Булгăр текен патшалăх тытăмĕнче пурăннă. Булгăр улпучĕсемпе купцисем Атăл тăрăх çӳрене арабсемпе, перççийцăсемпе суту-илӳ туса пурăннă. Çавăн чухне арабсенчен, перçийцăсенчен Булгăр патшалăхĕнче пурăнакан халăха траххом чирĕ йернĕ пулмалла.

Булгăрсен улпучĕсем, купцисем чăваш ĕçхалăхне питĕ хытă хĕсĕрлесе пуранна, вĕсенчен куланай нумай илсе тăнă. Çавăнпа ĕçлекен халăха пурăнма йăвăр пулнă. Вĕсем çуклăхра хĕн курса пурăннипе, вĕсен хушшинче трахком чирĕ çав вăхăтсенчех сарăлма тытăннă.

Çичĕ çĕр çула йахăн ĕлĕк булгăрсен патшалăхне тутар ханĕсем пăхăнтарнă. Çавăн чух вара чăваш ĕçхалăхĕ те тутар ханĕсен, мурзисен аллине лекнĕ. Кайран, тутар ханĕсене Мускав кңазĕсем, улпучĕсем çĕнтерсен, чăваш ĕçхалăхĕ вара вырăс улпучĕсен аллине куçса каллех пусмăра лекет. Вара вĕсем револуци пуличченех пусмăрлăхра, йывăрлăхра пурăнаççĕ. Вĕсене вырăс улпучĕсем, войеводисем, пупсем питĕ хытă йухăнтарнă. Вырăс улпучĕсем чăваш ĕççыннийĕсен лайăх тырă пулакан çĕрĕсене турта-турта илнĕ, вĕсене пысăк лайăх çырмасем патĕнчен хăвала-хăвала йанă, пĕрмайах пысăк куланайпа хĕсĕрленĕ. Чăваш ĕççынниййĕсем вырăс улпучĕсенчен, вĕсен прикашчĕкĕсенчен вăрмансене, лупашкасене, лачакасене тарса пытанса пурăннă.

Вырăс улпучĕсенчен пуçне вĕсене хăйсен халăхĕсен пуйан-куштанĕсем, кулаксем

те калама çук пусмăрласа пурăннă. Çавăнпа чăваш ĕçхалăхĕ тĕрлĕрен тĕрлĕ пусмăрта пулнăран унăн пурнăçĕ пĕрмайах йухăнса пынă.

Вырăс патши, улпутсем вак халăха çут-талла кăлармашухăшламан-вĕсене тĕт-тĕмре усрама тăрăшнă, шкулсем туман, вĕсем пулнă пулсан та унта турăсем çинчен кăна вĕрентнĕ, ĕççыннисене пĕчекренех ул-тавпа минкелетсе ÿстернĕ. Чăваш çырăвĕ тухсан, чăвашла кĕнекесем çинче турă çин-чен тата патшапа улпутсене йепле хисеп-лесе, пăхăнса пурăнмалли çинчен анчах çырнă. Çапла, чăваш ĕççынниĕ йăхран-йăха асапланса, чухăнлăхра, таса марлăхра пу-рăннă. Çавăнпа вĕсен хушшинче траххом чирĕ, тата ытти чирсем те, пуринчен ытла сарăлса кайнă. Вăл чирпе кĕрешме патша правиттĕлстви чăвашсем валли, çаплах ытти вак халăхсем валли те, больницасем туман, вĕсен пурнăçне ним йенчен те çăмăллатма тăрăшман.

Октябĕр револуцийĕ кăна пур вак ха-лăхсене те иккĕле пусмăртан хăтарса пур халăха та пĕр тан турĕ. Парттипе совет влаçĕ ленинла нацилле политтĕке пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынипе халь ССРС-чи пур

халăх та пĕр-пĕринпе пур йенчен те пĕр пек пулса пыраҫ.

## Траххом чирĕ

Траххомă—грек сăмахĕ, чăвашла—шатра, тени пулаҫ вăл. Чăвашсем те траххома куҫ шатри тесе калаҫҫĕ. Траххом чирĕ—питĕ усал чир. Вăл вăрттăн ҫыртакан йытă пек, систермесĕр пуҫланса кайаҫ. Хăш ҫын пирвайах ăна траххом йерниие сисмест те. Пĕри калаҫ: куҫ кăшт хĕрелсе ҫӳрет, ирсенче куҫ хӳрине (сăмсине) пӳр тухаҫ, тет, тепри,—куҫа хăйăр сапнă пек туйăнаҫ, ҫил ҫинче куҫҫул йухаҫ, куҫ йӳҫĕхсе ҫӳрет, тет. Нумайĕшĕ куҫ ыратмасҫ тесех калаҫҫĕ. Куҫ хупаххине таврăрса пăхсан, куҫ хупаххин мима (наймa пĕрлешĕвĕ) витти ҫинче вир пĕрчи пек кăшт кăваклăрах хĕрлĕ шатрасем курăнаҫҫĕ. Ҫав



2-мĕш ӳк. Куҫ хупаххисен мима витти ҫине трахх м шатрисем тухса тулнă.

шатрасем малтанах пумай пулмаççĕ. Кайран—куçа емеллес ĕçе кайа хăварса пырсан çав шатрасем нумайланнăçемĕн нумайланса пыраççĕ, пĕтĕм куç хупаххин мима виттине хупласа илеççĕ. Вăл вăхăтра мима витти те хулăмланат. Çав вăхăтра куç хупаххин мима витĕмĕ автан мерченĕ пек хĕп-хĕрлĕ куранса тăрат.

Траххом микробĕ куç хупаххин варринелле кайса, куç хупаххи кăмăрчакне те тивет, хăш чухне хулăмлатат. Шатра пит нумаййипе, кăмăрчакпа мима витти хулăмланнипе куç хупаххи йăвăрланат, куç лайăх уçăлми пулат. Çавăн пек чирленĕ çынсем йалан çывăрса çӳренĕ пек çӳреççĕ.

Шатрана чĕрнепе пуссан, шатраран шапа вăлчи пек йапала йухса тухат. Шатра йалан пĕр пек тăмаст, вăл тăрсан-тăрсан çурăлат. Ун выранне пĕчĕкçеççĕ çуракsem пулса тăраççĕ, вĕсем çĕвĕленсе тӳрленеççĕ. Шатрасем çурăлнă вăхăтра куçран тухакан пӳр, куççул—питĕ усал, вăл урăх çынна час йерме пултарат. Унтан вара малалла пĕр шатра çурăлат, ун вырăнĕ çĕвĕленсе тӳрленет те, çавăнта тепĕр çĕнĕ шатра тухат. Çапла вара траххома çийĕнчех тӳрлетмесен, вăл 20—30 çула çитиччен пы-

ма пултарат, хӑшӗнне вара виличченех тӳрлетме май пулмаст. Траххом нумайа пырсан мима витӗмӗ пӗтӗмпех ҫӗвӗленсе кайат, кӗскелет. Вӑхӑтра тӳрлетсен шатрасем пӗтеҫҫӗ те, ун вырӑнне нумай мар ҫӗвӗсем пулса йулаҫҫӗ. Ҫав ҫӗвӗсене пӑхса, тухтӑрсем ҫын ӗлӗк траххомпа чирленине пӗлеҫҫӗ. Шатра сахал пулсан, вӑхӑтра тӳрлетсен ҫӗвӗсем пит сахал йулаҫҫӗ, хӑш чухне вӗсем ӳстерекен кӗленчесӗр, ахаљ куҫпа пӑхсан курӑнмаҫҫӗ те.




3-мӗш ӳк. 1—ҫӳлти куҫ хупаххи; 2 2—мима витти ҫӗвӗленсе кӗскелнипе куҫ хупаххине тавӑрса илнӗ; 3—куҫ хӑрпӑкӗ шалалла таврӑнса кӗрсе куҫа чикет; 4—майракӑ витти шурӑланма пуҫланӑ.

Мима витти пит нумай ҫӗвӗленсен, вӑл куҫ хупаххине шалалла туртса валашка пек тавӑрса хурат. Куҫ хӑрпӑкӗсем вара малалла ӳсесси вырӑнне, кайалла, куҫ улми йенне ӳсме тытӑнаҫҫӗ, куҫ улмине чике пуҫлаҫҫӗ.

Вара çавăн пек пулнине «куç хăрпăкĕ таварăнать» теççĕ. Нумайĕшĕ тухтăр патне пырсан «куç нихăçан та ыратманччĕ, пĕрер ерне кăна ĕнтĕ куç хăрпăкĕ таврăнма пуçларĕ» теççĕ. „Сан куçу нумайранпах траххомпа пăсăлса çӳрет“ тесен, вăл çиленет,— «есĕ мăшкăлатăн» тесе вăрçать. Пĕлмен çынна ăнлантарма йывăр, вăл сана итлеместь те, ĕненместь те. Таварăнакан куç хăрпăкне татсан, ун вырăнне татах çĕнĕ хăрпăк тухать. Йалан татсан куç хăрпăкĕ çинçеленсе тухакан пулать. Ана чăвашсем вара „куçа тĕк тухрĕ“ теççĕ.

Куç хупаххи йалан уçăла-уçăла хупăннипе траххом шатри мăйрака виттине хырать, сийен тăвать. Мăйрака витти тĕксĕмленме тытăнать. Çӳл йенчен ун çине йуп тымарĕсем анаççĕ. Мăйрака витти тĕксĕмленнипе (тарланă чӳрече пек) çутта куç ăшне лайăх кĕртмест. Çавăн чухне куç пит ыратать, куççу ĕ йухать, çын çутталла пăхаймасть. Чирлĕ çынсем çутта чăтаймасăр чӳречесене хупса лартаççĕ, вăхăта тĕттĕм вырăнсенче ирттерме тăрăшаççĕ. Тасамарлăхра пурăнсан, куç тата хытăран-хытă пăсăлса пырать.

Мăйрака витти пăсăлнă вăхăтра куçа пит хытă сыхлас пулать; ана вăхăтра пĕлсе

тӯрлетмесен майрака витти малалла тата нумайрах тĕксĕмленет, çутта куç ăшне тата сахалтарах кӳрткен пулать—çын вара суккăрлансах ларать. Хăш чухне майрака витти синче пӳрленнĕ суран (язва) пулать. Йазва пӳрленсе йĕри тавра, таранăшпе ӳссе саралать. Лайăх тӳрлетмесен куç шăрçи шăтса йухса тухать. Çын ĕмĕрлĕхех суккăрланса йулать.

Майрака витти çинче куç суранĕ вир пĕрчи пек анчах пулсан та, çĕвĕленсе тӳрленет. Çав çĕвĕ шурă тĕслĕ, çавăнпа вара „куçа шурă илнĕ" теççĕ. Çамрăк çыннăн шурри мăкăнь пĕрчи пек пулсан, хулăн пулмасан ăна имçампа (емелпе) йама май пур. Шурри пысăк пулсан нимĕнпе те йама май çук. Касса илсен ун выранне шăтăк, суран пулать. Çав суран çĕвĕленсе тӳрленет те (куç йухса тухмасан) куçа татах шурă саралать. Шурăпа (бельмо) йазвăна пĕр йапала выран-



4-мĕш ӳк. Траххомлă куçăн майрака виттине çӳлтен йун тымарĕсемпе шурă хупласа анать.

не хума кирлӗ мар. Куҫ пăсăлнă хыççăн суранланаť. Ҫав суранне йазвă теççӗ. Кайран суранӗ тўрленнӗ пек пулса туртăнса, ҫӗвӗленсе ларсан вара ҫавна куҫа шурă илнӗ теççӗ. Куҫ ҫинче йазвă чухне куҫ ыратаť ҫутталла пăхаймасť. Йазвă ҫӗвӗленсе куҫа шурă илсен вара куҫ ыратмасť, пăхма чармасť, анчах ним курми пулаť.

Траххом пит нумайа кайсан, куҫ хупаххин мима витти пӗтӗмпех ҫӗвӗленсе кайаť. Вара куççуль каналӗсем питӗрнеççӗ, мима тăвакан глҍандулҍсем пӗтеççӗ. Куççулҍ, мима (слизь) ҫуккипе куҫ хупаххи шал йенчен типет, унтан вара куҫ улми те мал йенчен типсе ларат. Майрака витти тăкăскăланаť, тӗкеӗмленет, типет, хăй виттӗр ҫутта куҫ ăшне кӗртми пулаť, вара куҫ пӗтет, суккăрланса лараť, ăна вара нимӗнле имҫампа та емелллеме май ҫук. Епир халҍ маларах—траххом вăрттăн, систермесӗр тытăнса, кайран ҫынна суккăр тăваť терӗмӗр. Хăш чухне траххом сасартăк, хăвăрт тытăнаť. Куҫ пит хытă хӗрелет, куҫран пўр нумай тухаť, мима витти ҫине шатра тухма тытăнаť, майрака витти ҫине ҫўлти йун тымарӗсем анаççӗ, вара куҫ курми пулаť.

Траххомлă куçа хăш чухне тата ытти чир те йерет. Çавăн чухне траххомлă куçран нумай пӳр тухать. Çавăнпа хутте хăçан та, куç пăсăлсан, куçа тухтăр патне кайса кăтартас пулать. Суккăр пулас мар тесен, тухтăр мĕн хушнине пĕтĕмпе тĕрĕс тăвас пулать.

## Траххом пĕр-пĕрне йепле йерет

Тĕнчере тĕрлĕ микробсем питĕ нумай. Вĕсене епир ахаљ куçпа кураймастпăр питĕ пысăклатакен кĕленчепе (микроскопа) кăна курма пултаратпăр.

Ахаљ куçпа курăнман хурт тавраш не микробсем тата бактерисем теççĕ. Хăш микробсем пире пит нумай усă параççĕ, хăшĕсем нумай сийен тăваççĕ—çынна чирлетсе вĕлерме те пултараççĕ.

Кăвас йӳçĕтекен, сăра тăвакан, турăх йӳçĕтекен тата çĕпрери микробсем етеме усă кӳреççĕ.

Усал тăвакан микробсем нумай тĕрлĕ: пĕри халерпе чирлетет, тепри—тифпа, виççĕмĕшĕ—чеччепе, тăваттăмăшĕ—йунлă варвиттипе, тата ытти тĕрлĕ усал микробсем те пур. Кашни чирĕн хăйĕн микробĕ пур.

Траххом микробĕ мима витти çинчи шатрара пурнăт. Унтан вăл куççулĕпе, куç пӳрĕпе хутăшса йаланах тухса тăрат. Куççулĕпе куççул каналĕ тăрăх сăмсана кайат. Сăмсан кăй йенчен çăвара та кайма пултарат. Çавăнпа, траххом ан йертĕр тесен, таса, сывлăхлă куç çине трахомлă çыннăн куç пӳрĕ, куççулĕ, манка-сурчăк тавраше лекесрен сыхланмалла. Вăл микробсем сывă çыннăн куçне тĕрлĕ майпа пырса лекме пултараççĕ Сăмахран, çемйере пурте пĕр алшăллипе шăлăнса тăрсан, çемйере пĕрин куçĕ трахомлă пулсан, алшăлли урлă пĕтĕм çемйене трахом йерме пултарат. Куç чирĕ тĕлĕшĕнчен сыхланма трахомлă çын, ирхине тăрсан та, кăнтăрла та куç пӳресене кунне темиçе хут алшăллипе шăлса илет. Алшăлли çине трахом микробĕллĕ куççулпе пӳр тăрса йулат. Çав алшăллипе тепĕр сывă куçлă çын пырса шăлсан, вăл хăйĕн таса куçне трахом йертме пултарат. Çавăнпа кашни çыннăн уйрăм алшăлли пулмалла.

Пирĕн чăваш хушшинче ĕлĕкрех харпăр-хăйне алшăлли пулнине йуратмастчĕç. Киле çĕнĕ çын килсен, вăл хăй уйрăм алшăллипе шăлăнас тесен, ваттисем çиленсе çапла калатчĕç: «Пирĕн кин усал пулчĕ

пулĕ, халех уйрăм алшăллипе шăлăнаҫ, вăл пире хисеплес ҫук.» Хăйсен траххомлă кусĕсем пӳрленсе ҫӳреççĕ, куç хăрпăксем шăл йенне таврăнса кĕнĕ, ҫаплах пĕр алшăллипе шăлăнасшăн пулнă вĕсем. Чăвашсем хушшинче нумайĕшĕ пирĕсене шеллесе (хĕрхенсе) таса пиртен тунă алшăлли вырăнне чылайĕшĕ ҫĕтĕк-ҫурăк ҫакса йараҫчĕç. Анчах вĕсене те ха пĕрмайах ҫуса кирлĕ пек таса тытса тăман. Ĕлĕкрех чăваш йалĕсем тăрăх ҫӳренĕ вăхăтра хĕрарăмсем ҫапла каласнине те илтнĕ епĕ: «Вилсен хама асăнса салатмалăх ҫӳпçере 5—6 тăрăх шурă пир пур-ха, икĕ тăрăхĕ хĕр чухне тунийех-ха» Ҫав херарамăн пӳртне кĕрсе пăхсан, алшăлли вырăнне темĕскер ҫĕтĕк-ҫурăкĕ ҫакăнса тăнине курма пулаҫчĕ. Хаљ колхозра ĕçхресченĕн пурнăҫĕ нумай малалла кайрĕ ĕнтĕ. Вĕсем хаљ куљттурлă пурăнма тытăнаççĕ. Анчах ҫавах та ĕлĕкхи йăласем тухса пĕтмен-ха. Ҫав ĕлĕкхи куљттурсăрлăх йăлисене хиј ĕç пирĕн вăйлăн кĕрешмелле.

Трахxом минтер урлă та пит нумай сарăлаҫ. Ҫыварнă чухне траххомлă куçран пӳр йухса, куççул йухса минтер питне варлаҫ. Ҫав минтер ҫине сывă куçлă ҫын выртсан, унăн куçне трахxомлă пӳр, куççуљ лекет,

вара унӑн куҫне те траххом йерме пултарать. Ҫавӑнпа кашни ҫыннӑн харпӑр-хӑйӗн уйрӑм минтер, уйрӑм алшӑлли пулмалла. Минтер питне час-часах ҫуса тасатса тӑрас пулать. Ҫавӑнпа, траххом ан йертӗр тесен, ҫывӑрма та уйрӑм вырӑн кирлӗ. Хӑшӗ-пӗрисем пӗр вырӑн ҫинче 3—4 ҫын выртса тӑрӗҫҫӗ. Харпӑр-хӑй валли уйрӑм минтер тӑвас вырӑнне, пурне те валли тӳшек пек, 3—4 ҫын выртмалӑх, вӑрӑм минтер тума, ун ҫинче ҫывӑраҫҫӗ. Ҫав йӑласемпе пурипе те вӑйлӑн кӗрешес пулать.

Траххом мунча урлӑ та йерме пултарать. Мунчара час-часах пурте пӗр милкӗпе ҫапӑнаҫҫӗ. Пӗрре мунча хутнипех 2—3 ҫемйе пӗрле мунча кӗреҫҫӗ. Ҫавӑнма ҫур витрене йахӑн чукунпа кана шыв лартаҫҫӗ, сӗлтӗ (щелок) тумаҫҫӗ. Мунчара ҫӑванмашкӑн пуринщӗн те пӗр чӑхсене пӑтратса памалли валашка пек валашка кӑна. Ҫапӑннӑ чухне, мунчара вӗрипе траххомлӑ куҫран пӳр тухать, куҫҫуль йухать. Вара вӗрийе чӑтайман пирки ҫапӑнаканни лапка ҫинчен анса питне-куҫне, шыва витре ҫинченех аллисемпе ӑсса илсе ҫӑванать. Вара куҫ пӳрӗпе куҫҫулӗ витре ҫине кайать. Тепӗр сывӑ куҫлӑ ҫын ҫав шывпах ҫӑванать те траххомпа чирлеме пултарать.

Хăш-пĕр чухне валашкаран пĕрерĕн икшерĕн 10-15 çын çăвăнса тухаççĕ. Çăвăннă чухне траххомлă куçран пŭр, куççул валашка çине кайат. Валашка çумне, унăн шатăкĕсене траххомлă куççул, пŭр сыпăçса лараççĕ. Сывă çын çав валашкаран çăвăнсан траххомпа чирлеме пултарать. Мунчара пĕри çăвăннă хыççăн тепри çăвăначчен, валашкана вĕри шывпа пĕçертсе çумалла. Сивĕ шывпа çеç çусан, траххом микробĕсем вилмеççĕ. Тата час-часах кайран кĕрекенсем валашкана çăвăнма вĕри шыв сахал йулать. Мунчара çапла çеç çăвăнкаланипе нумайах тасалаймăн. Тасаласси вырăнне тĕрлĕ чир-ем кăна йерме пултараççĕ. Мунчара чăнахах та çăвăнса тасалас тесен, тĕрлĕ чир ан йертĕр тесен, мунчасене шурăлла хутмалла тăвас пулать. Хуранпа вĕри шыв нумайрах вĕретсе хумалла, сĕлтĕ (шчелок) тумалла, таса посудăсенчен çăвăнмалла.

Таса мар мунчасенче çемйи-çемйипе пĕрле çăвăнсан, траххом сынран çанна, çемйерен çемйене сиксе пырать, пĕтĕм йала саралма пултарать.

Траххом тата «аванлашса» пĕрне-пĕри алă тытни урлă тăрăх пит нумай саралать. Траххомлă çынсем куç пŭрĕсене, куççуль

йухнипе йалан куçĕсене шăлса çӳреççĕ. Весен аллисем йалан вараланчăклă, траххомлă пӳрпе, куç çулне шăлса çӳренипе, сывă çынна «сывпуллапiса» алă панă чух— траххомă чирне аласем урлă йертеççĕ. Çил çинчен, сивĕрен пӳрте кĕрсен траххомлă çынсем малтан куçĕсене алăпа шăлса илеççĕ те, унтан кашнине алă парса тухаççĕ. Чирлĕ çын таса мар алăпа тытса паллашнипе, сывă çын аллине усал чир йертсе хăварма пултарать.

Епир алăпа кунĕпе ĕçре-мĕнре тем те пĕр тыткалатпăр (укçа, алăк тытки, пуртăсем, сенĕксем, кĕреплесем тата ытти тĕрлĕ йапаласем те). Кун каçиччен пирĕн ала урлă пит нумай йапала иртсе кайать. Çак йапаласем пирĕн алла çитсе лекеччен тĕрлĕ алăра, траххомлă çын аллинче те пулма пултараççĕ. Пирĕн аласем çумне кунĕпе тĕрлĕ чирсен микробĕсем çыпçăнма пултараççĕ. Çавăнпа çуман аласемпе çиме ларма, куççене шăлма йурамасть. Алла таса тытас пулать, ăна час-час çăвас пулать. Хăш чухне алăпа куçа тытмалла, шăлмалла пулсан, таса тутăрпа шăлас пулать. Тутăр пулмасан куçа аллăн тӳртĕн йенĕпе шăлас пулать, м. т. аллăн вăл йенĕ сахал варланать.

Час-часах пите, аласене курка çинчен шыв йарса çăваççĕ. Çăваннă чухне куркине ăçта килчĕ унта лартаççĕ. Унтан çав куркапах шыв ĕçеççĕ. Тата хăшĕ, çăвара шыв сыпаççĕ те çăвартан алăсем çине йарса çăвăнаççĕ. Хаш-пĕр хĕр-рăмсем ачисен питне те çаплах çăваççĕ. Çапла çусан çăварти шыв трахомлă сурчăкпа хутшăнса, ачасен куçне трахом йертет. Çăвăнпа лайăх, таса, çăванмалли кăмкантан йухса тăракан шывпа кăна çăвăнас пулат.

Тĕрлĕ йăларан нумай чир йерет. Нимĕçсем таса пурнаççĕ. Çапах вĕсен хушшинче те трахом сахал теме çук. Мĕншĕн тесен вĕсен те кирлĕ мар йăла пур. Вĕсем куçлăх пек таса тазсем çинчен çăвăнаççĕ. Çăваннă чухне таса мар шыв таз çине йухса анат. Çав тазри шывпа пĕрин хыççăн тепри çăвăнаççĕ. Çапла çăваннипе вĕсен хушшинче пĕр трахомлă çын пулсан та пĕтĕм çынна трахом йертме пултарат. Çак йăла пирки нимĕçсем йепле таса пурансан та вĕсен хушшинче трахом пур. Вак халăхсен ачисем час-часах сăпкарах трахомпа аптраççĕ. Ачасен куçĕсем хĕрелеççĕ, куçĕсенчен сап-сарă пўр тухат: куç хупаххине тавăрса пăхсан мима витти хĕп-хĕрлĕн курăнат,

траххом шатри малтанах пулмасть-ха, кайарах вара вăл та туха пуçлать. Ача куçпа чирлесен: «ачан куçне куç сарри тухрĕ, йал ĕречĕ çитрĕ» теççĕ. Пĕчĕк ачасен куçĕ пăсăлмасан (куç сарри тухмасан) хĕрарăмсем: «Мĕншĕн ман ачана куç сарри тухмасть» тесе хуйхăраççĕ. Ачин куçĕ хĕрелсен куç хупаххисем пӳрленсе, хупланса ларсан амăшĕсем: «çын ĕречĕ çитре ĕнтĕ» тесе лăпланаççĕ. Çапла калани вăл вĕсен тĕттĕмлĕхне, культтурсăрлăхне пĕлтерет.

Йалсенче ачасене час-часах ĕçлеме кайма пултарайман, начар куçлă хĕрсем, ватă карчăксем пăхаççĕ. Вĕсен нумайĕшĕн куçĕсем траххомлă. Вĕсем хăйсен тутри вĕçĕпе хăйсен пӳрленсе тăракан куçĕсене шăлаççĕ. Ача макăрма тытăнсан ачана ачашласа: «Ачам, ачам, ан макăр»—тесе, хăйсен тутăр вĕçĕне, хаљ кăна хăйĕн траххомлă куçне шăлнă йапалапа, ача куçне шăлса илеççĕ. Çапла вара ача сăпкарах, пĕчеккĕллех траххомпа чирлет. Акă ĕнтĕ амăш кĕтсе тăракан «куç сарри» ачана ăçтан килсе лекет. Ачасен куçне сыхлас тесен, вĕсене лайăх, таса куçлă ӳстерес тесен, ачасене траххомлă çынсене пăхтарас пулмасть. Вĕсене ачасен йаçлине, ачасен плошчаткине парас пулать.

Унта ҫестрасене, воҫпитатӗлницӑсене пӗтӗмпех сывлӑхлисене анчах илеҫҫӗ.

Куҫа тата тӗтӗм питӗ антрататӑ. Тӗтӗмпе куҫ хӗрелет, куҫҫуль йухнипе ҫын куҫа йалан алӑпа сӗрсе йе хӑйне ҫынтан, йе ҫынна хӑйӗнчен траххом йертме пултаратӑ. Церре хура мунчана хутасси мӗне кӑна тӑмасть куҫшӑн. Вӑл куҫа пӑсса хуратӑ.

Тата траххом шӑна урлӑ та йерме пултаратӑ. Шӑнасем ҫын ҫывӑрнӑ чухне траххомлӑ, пӳрлӗ куҫ ҫине питӗ йышлӑн ларасҫӗ. Вӗсен урисем ҫумне траххомлӑ куҫ пӳрӗ, куҫҫулӗ ҫыпҫӑнатӑ. Ҫав шӑнасем сывӑ куҫ ҫине ларсан траххом йертме пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа траххомпа кӗрешнӗ чухне шӑнасене те пӗтерес пулатӑ.

Траххом чирӗ йепле сарӑлнине, вӑл хӑш халӑх хушшинче мӗншӗн нумайтараххине епӗр куртӑмӑр ӗнтӗ. Траххом малашне ан сарӑлтӑр тесен, ӑна тӗпӗ-тымарӗпех пӗтерес тесен, мӗн пур ӗҫҫыннийӗн унӑн хӑрушӑлӑхне пӗлсе, унпа ҫине тӑрса хытӑ кӗрешес пулатӑ.

## Траххом йерсен мӗн тумалла

Траххом йерсен «хӑйех иртӗ-ха» тесе тӑмалла мар. Вахӑтра тӳрлетмесен вӑл вӑрӑма пыратӑ, куҫа суккӑр таватӑ. Хӑш-пӗрисем куҫ

пăсăлсан тухтăр патне кайма шухăшламаççĕ, тӳрлетесшĕн тăрăшмаççĕ. Пĕрин «вăхăт çук» теприншĕн «лаша пушă мар» хăшĕ «кăшт куç пăсăлнипе, хĕрелнипе тухтăр патне кайса лашана асаплантарса çуремĕн ĕнтĕ» теççĕ. Нумайĕшĕ «чир хăйех иртсе кайĕ-ха» теççĕ. Чир çав вăхăтра сарăлнăçемĕн сарăлса пырать. Кайран вара ăна çĕнтерме питĕ йывăр, çĕнтерме май çук пулса тăрать.

Траххома куçа шурă иличчен, куç хăрпăкĕ таврăнма тытăниччен, куç типе пуçличчен тӳрлетме тăрăшмалла. Шатра тухнă вăхăтра, шатрана тухтăра хыртармалла. Хăш чухне шатра час пĕтмесен, шатрасене кашни уйăхра пĕр-икĕ хут хыртарас пулать. Хырнипе куç шăрçи сиенленмест, траххом кăна часрах пĕтет. Хырнă хушăсенче тухтăр пана имçамсене, вăл каланă пек, куçа йамалла. Куç чирĕ хăвăртрах, пĕтĕмпех пĕттĕр тесен, кашни кун тухтăр патне кайса имçам сĕртермелле. Траххом шатрине хырмасассăн куç имçампа кăна час тӳрленмест, питĕ вăраха пырать. Хăшĕсем куç 5—6 кунтанах тӳрленмесен, хăйсем пĕлменнипе: «пире тухтăр лайăх имçам парать-им, йешĕл сенкер шывĕ парать те, унпа мĕн усă пулмалла» теççĕ, малалла имçам йама пăрахаç-

çĕ. Тухтăр йепле пулсан та, хуť те хăçан та, хăй мĕн вĕреннĕ, пĕлнĕ тăрăх тӳрлетме тăрăшаť. Чир тӳрленменни тухтăртан кăна килмест, нумайĕшĕ чирлĕ çынран, хăйĕнчен килет. Чирлĕ çын хăйшĕн хăй тăрăшмасан, тухтăр йепле тăрăшсан та усă сахал. Пирĕн хађхи вăхăтра траххомпа кĕрешме йешĕл сенкертен (кăвак чул) лайăх имçам та çук. Анчах унпа пĕлсе тӳрлетме кирлĕ. Куç питĕ пӳрленнĕ вăхăтра ђаписран (тамăк чулĕ) тунă имçам кирлĕ, пӳр сахалтарах тухнă чухне йешĕл сенкертен тунă имçам лайăх. Çапах пĕлсе тӳрлетсен те траххом ик-виç ернерех пĕтмест, виç-тăват уйăха, çулталăка та пыма пултараť. Çавăнпа траххома арăслантарма йурамасť, çийĕнчех—маларах тӳрлетме тăрăшмалла. Куç хăрпăкĕ таврăна пуçласан, ăна малалла ӳсмелле нимĕнле имçампа та тăваймастăн. Куç хăрпăкĕ (тĕк) таврăннине опперацийпе (касса илсен) анчах тӳрлетме пулаť. Ват карчăксем таврăнакан тĕксене хăйсен мăйĕ тавра çакса çӳрекен хыпчăкĕсемпе татаççĕ. Хыпчăкпа татнă хысçăн, татах тĕк тухаť, йалан çынна асаплантарса пурăнаť. Çак таврăнакан куç хăрпăкне, куç суккăр ан пултăр тесен, вăхăтра касса тӳрлетес пулаť.



5-мĕш ӳк. Çакнашкал шурă тӳмесене тӳлемлĕ çипсене, шăмă татăкĕсене култтурсăр, тĕттĕмрр пурăннă вак халăхсем тĕрлĕ куç чирĕсем турленччĕр, куç шурри кайтăр тесе, аллисем, мăйĕсем çине çакса çӳренĕ.

Майрака витти пӗтӗмӗшпех ун ҫинче суран (йазвӑ) пулсан, куҫа лайӑх сыхлас пулат, тухтӑр патне ҫӳресе, тӑрӑшса тӳрлетес пулат, мӗншӗн тесен ҫак вӑхӑтра куҫ питӗ сурат. Чирлӗ сынсем 2—3 кунта тухтӑр имҫамӗпе тӳрленме пуҫлани палӑрмасан, йумӑҫ патне кайаҫҫӗ. Хӑшӗ тухтӑр патне кайачченех йумӑҫ патне кайаҫҫӗ. Йумӑҫ вӗре-вӗре алӑ ҫине тӳлемлӗ ҫипсем, шурӑ тӳмесем ҫыха-ҫыха йарат. Тӗттӗм халӑх хушшинче тӗрлӗ чиртен тӗрлӗ йапала ҫыхса йараҫҫӗ. Тутар арӑмӗсем алӑпа ҫырнӑ, кӗнекерен ҫурса илсе ҫырусем ҫӳҫ ҫитти ҫине ҫакса йараҫҫӗ. Ҫыру йӗпенсе пӑсӑласран, ӑна шӑк хӑмпипе чӑркаса ҫыхаҫҫӗ. Вӑл йапала вара нумай вӑхӑт ҫакса ҫӳренипе шӑршланса кайат. Хӑвӑрах шухӑшлӑр-ха, йепле ҫав йапаласем пире ҫак хӑрушӑ чиртен сыватма пултараҫҫӗ-ха? Епир шурӑ тӳмесем, тӳлемлӗ ҫипсем кӗпесемпе хамӑр ҫинче йаланах ҫакса ҫӳретпӗр. Мӗншӗн вӗсем пире тӗрлӗ чирсенчен пулӑшмаҫҫӗ.

Хӑш ҫӗртре ватӑ карчӑксем чӗлӗм туртса, чӗлхипе куҫ хупаххин мима виттине чӗлхепе ҫулаҫҫӗ. Ҫапла ҫуласа тӗрлӗ тиф, ҫифилис чирӗсем йертме пултараҫҫӗ. Тӗттӗм

халăх хушшинче суккăр пуласран хăраса темĕн те пĕр тунине шутласа та пĕтерес çук.

Хаљ колхозниксем çав тĕттĕмлĕхрен тухса пыраççĕ. Тĕрлĕ йăласемпе, йумăçсемпе питĕ хытă кĕрешес пулаť.

Куç хупаххи таврăннинчен опперации тусан чăвашсем хушшинче: «Куç тĕкне кастарсан ĕçлеме йурамасť» теççĕ. Вăл тĕрĕс мар. Хăвăрах шухăшлăр-ха. Тўрлетнĕ, тĕк тухман куçпа ĕçлеме аван-и, йе хăрпăк (тĕк) таврăнакан, чирлĕ куçпа ĕçлеме аванрах-и? Тўрлетнĕ куçпа ĕçлеме авантараххине пур те пĕлетпĕр. Нумайĕшĕ тата: «куça кастарсан ĕçлерĕм те, куç пăсăлчĕ, куça шурă илчĕ, татах тĕк туха пуçларĕ» теççĕ. Вăл ĕçленипе мар пулнă. Куç лайăх касăлманнипе кăна кайаллах тĕк (хăрпăк) тухма пултараť. Начар касăлсан, ĕçлесен ĕçлемесен те пурĕ-пĕрех тĕк тухаť. Хăрпăк таврăннине тўрлетсен те куçхупаххин мима витти çинчи траххом шатрисем пĕтмеççĕ, çаплипех тăрса йулаççĕ, çавăнпа куç хупаххи таврăннине опперации туса тўрлетсен те траххом шатрине тăрăшса пĕтерес пулаť. Вара куçăн майрака витти çине йазвă тухмасť, куça шурă илмест. Çаксене ăнланса, лайăх шута илсе, куççене вăхăтра, пĕлсе,

çине тăрса тăрăшса тӳрлетес пулаҫ. Траххом вăл тӳрленекен чир, траххомпа пĕр çын та суккăр пулмалла мар.

## Трахом ĕçхалăхне мĕнле сийен кӳрет

Траххом—нумайа пыракан чир. Вăл—тӳрлетмесен вăхăтран вăхăта, куçа начарлатнăçемĕн начарлатса, çамрăк, вăйпитти çынна ĕçе йурăхсăр туса хăвараҫ. Хăш траххомлă çын, çулталăкне икшер-виçшер ерне, йе уйăх пĕрре те ĕçе кайаймасăр килте пĕр усăсăр асапланса лараҫ, хăшĕ тата çăвĕпех чирпе асапланса ĕçе тухаймасҫ, ĕçлесен те траххомлă çын сывă куçлă çын пек ĕçе хăвăрт, тĕплĕ тăваймасҫ.

Пирĕн Вăтам Атăл крайĕнчи вак халăхсем хушшинче (чăваш, мăкшă, тутар) кăна траххомлă, хĕрлĕ, пӳрлĕ куçпа çӳрекен çынсем 450 000 çынна йахăн хисепленеççĕ. Вĕсем больницана уйăхра пĕр хут кăна кайсан та çулталăкне пилĕк мĕлйун çурра йахăн кун сухатаççĕ, тата мĕн чухлĕ лаша чуптараççĕ. Вĕсем кашни пĕр хут кăна вăтам шутпа 10 çухрăма çитиччен больницана кайсан та, çĕр йĕри-тавра 225 хут çаврăнма-

лăх çул тăваççĕ. Хăвăрах шухăшлăр-ха кашни больницана кайса мĕн чул вăхăт ирттернине хисеплесен тата лашан ахаль ирттеркен ĕç вăхăтне хисеплесен, траххом чирĕ ĕççыннине темĕн чухлĕ сийен кӳни палăрать. Больницана кашни траххомлă етем уйăхра пĕрре кăна кайсан та çавăн чухлĕ сийен пулать.

Траххомпа темиçе пин çын уйăхшар, виçшер уйăх, йе пĕтĕмпех суккăр пулса, ĕçлеймесĕр лараканисем, хăйсем чирпе асапланнинчен пуçне тата колхоза, патшалăхана ним усă параймаççĕ. Начар куçлă çын хай ĕçлейменнипе, хăйĕн пурнăçне те малалла йараймасть, вăл ĕнтĕ куçпа асапланса пурăннипе, колхозра ĕçлеймесĕр, колхоз ĕçне те малалла йама пултараймасть. Траххомлă çын ĕçкунĕсем сывă çын чухлĕ тăваймасть. Çавăнпа та унăн пурнăçĕ те сывă çыннăнчен начартарах пырать. Траххом чирĕ—чирлĕ çынна, чирлĕ çынăн çемйине, колхоза, патшалăха мĕн чухлĕ сийен тунине хисеплесе те кăлараймас çук.

Траххомпа куçĕсем начарланнипе çамрăк, вăйлă çынсем хĕрлĕ çара та кайаймаççĕ. Вĕсем Совет Сойузне унăн тăшманĕсем тапăнасран сыхлама та пултараймаççĕ. Хăш-

пĕр вак халăхлă районсенче траххом чирне пула хĕрлĕ çăра кайма йурăхсăррисем пит нумай пулаççĕ. Пĕр районри чăвашсенчен 1933-мĕш çулта хĕрлĕ çара кайма йурăхсăррисем 52% пулчĕç, мăкшăсем (мордвасем)—24%, тутарсем—18%, вырăссем—6%. Çак çамрăк, вăйлă сынсем траххом пулман пулсан, хĕрлĕ çара кайнă пулĕччĕç. Кунта та епĕр траххом чирĕ пире мĕнле сийен тунине куратпăр, çапла ĕнтĕ трахом чирĕ ĕçхалăхĕн пурнăçĕнче питĕ пысăк сийен кӳрет.

Çавăнпа та ĕнтĕ, малашне траххом чирне пĕтерес тĕлĕшпе мĕнпур вăйа хурса кĕрешме тытăнмалла. Ку ĕçе мĕнпур ĕçхалăхне мобилизацилемелле.

## Траххомпа йепле кĕрешмелле

Траххомăн тăшманĕсем—таса, куљттурлă пурăнакан сынсем. Кам таса, çителĕклĕ куљттурлă пурăнат, çавăн траххом çук, лексен те часах иртсе кайат, суккăр туса хăвармаст. Халĕ парттипе совет правиттĕлстви мĕн пур ĕççыннисене çутта кăларасшăн, çителĕклĕ пурлăхлă, куљттурлă пурнăçпа пурăнакан тăвасшăн тăрăшат. Ĕççыннисем хăйсен сывлăхĕшĕн хăйсем тăрăшмасан, тухтăр-

сем кăна нимĕн те тума пултараймаççĕ. Çавăнпа халăх сывлăхне сыхлас ĕçпе ĕçлекен комиссариат: „Ĕçхалăхĕн сывлăхĕ хăйĕн аллинче“ тет. Траххома пĕтерес тесен, культурлă пурнăçпа пурăнма вĕренес пулать.

Çемйере траххомпа чирлĕ çын пулсан, траххома, тăрăшса, тĕппипех пĕтерес тесен, çемйери ытти çынсене йересрен асăрханас пулать. Çемйере кашни çыннăн хăйĕн уйрăм алшăлли пулмалла, кашнийĕнех уйрăм минтер (çытар) çинче, уйрăм вырăн çинче выртса тăрас пулать. Алла йалан таса тытас пулать. Мунчасене таса, шурăлла тăвас пулать. Унта нумай, çителĕклĕ шыв вĕретес пулать. Сĕлтĕ (шчелок) тăвас пулать. Çăвăнасса таса таз çинчен, тазĕсене пĕрин хыççăн тепри çăвăнас умĕн, вĕри шывпа пĕçертсе, çăвăнас пулать. Траххомлă çынсем уйрăм тазран çăвăнмалла, мунчана сывă, траххомсăр çынсен хыçĕнчен, кайран кĕмелле. Колхозниксен мунчасене ушкăнланса пысăк, лайăх, тухтăрсем, техниксем калана тăрăх тăвас пулать. Чăвашсем хушшинче траххом малалла ан сарăлтăр тесен, çамрăк ачасене таса пурăнма вĕрентес пулать. Вĕсен куçĕсем пăсăлсан вăхăтра тўрлетес пулать. Амĕш пулас хĕрарăмăн куçĕ траххомлă пулсан, ача çу-

ратичченех траххома тӳрлетес пулаҫ. Траххомлӑ ҫынӑн ачисем сӑпккарах траххомпа „куҫ саррипе“ чирлеме пултараҫҫӗ. Траххомлӑ ҫынсене килте те, йаҫлӗре те, ача пӑхтарма йурамаҫ. Йаҫлӗри ачасене пӑхакан ҫынсен куҫӗсене пуринне те пӑхмалла, траххомлисем пулсан вӗсене куҫӗсене тӳрлетичченачасем патне йама йурамаҫ.

Шкулта траххомлӑ ачасем пулсассӑн, ытти таса куҫлӑ учениксем тетраҫсем, крих вӗлсем, ручкӑсем, кӗнекесем, пур (мел) урлӑ пӗр-пӗрне траххом йертме пултараҫҫӗ. Вӗренекен ачасен траххомне шкултах тӳрлетес пулаҫ. Ана тухтӑрсем айакра пулсан, тухтӑр кӑтартса панӑ тӑрӑх вӗрентекенсем те тума пултараҫҫӗ. Анчах пит хытӑ пӳрленекен куҫпа куҫ пӳрӗ пӗтиччен шкула ҫӳреме йурамаҫ. Колхозра траххомлӑ ҫынсем, ӗҫ ҫинче те ытти колхозниксене чир йертме пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа колхозра траххома тӳрлетес ӗҫе массӑллӑн пуҫласа йамалла, колхозниксене куҫӗсене ирӗксӗрех тӳрлеттерес пулаҫ. Анчах хаљхи вӑхӑтра бољницасем, ҫавнашкалах тухтӑрсем те кирлӗ таранах ҫителӗклӗ мар-ха. Хӑш чухне бољницана 20—30 ҫухрӑма кайма тивет. Ҫак ҫитменлӗхсене пӗтерес пирки траххом тӳрлетмелли пункт-

сем уçма тăрăшаççĕ. Вĕсене колхозниксене ĕçрен таталмасăр çÿреме, кашни йалтах уçмалла, çак пунктсене чи малтан траххом пысăккăн саралнă йалсенче уçас пулат. Трахома тÿрлетмелли вырăнта (пункт) колхозниксен траххомне тухтăр каланă тăрăх. вĕреннĕ çестрасем тÿрлетсе тăмалла. Чăваш республикĕнче çестрасем ĕçленĕ йалсенче траххом сахалланнă ĕнтĕ. Анчах мĕн пур траххомлă йалсенче ĕçлемелĕх вĕреннĕ çестрасем хатĕрлесе кăларма средствăсем питĕ нумай кирлĕ. Пысăк колхозсенче çестрасене хăйсен вăйĕпе тытса тăмалла туни аван пулмалла. Çак çестра пĕр çул хушшинчех хăйĕн расхутне татса нумай усă тăвĕччĕ. Çак пунктсем çуккипе чи кирлĕ хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче 10-15 çухрăма лашапа çулталăкра темĕн чухлĕ ĕççынни больницасене каймалла пулат. Хăшĕ тухтăр патне кайаймасăр ерни ернипе ĕçлеймесĕр пурнаççĕ. Йалтах çестра пулсан, тухтăр патне те йалан кайас çук пулĕччĕ, куçа вăхăтра тÿрлетсе ĕçрен те сахал сын йулĕччĕç, тата ĕçре аману, хуçăлу, сыпă сиксен тĕрлĕ чиртен пăхса сурансене тÿрлетсе сыхса тăрĕччĕ. Чирсенчен йепле сыхланмалли çинчен килĕрен киле çÿресе халăха чир-чĕрпе кĕрешме тĕрлĕрен канаш-

сем парса вĕрентсе ҫӳрĕччĕ. Ҫак ĕҫсене туса ҫестра колхоза нумай усă кӳрĕччĕ. Ҫапах та ҫестрана вăй ҫук тесе хăш-пĕр колхозра тытса усрама шухăшламаҫҫĕ. Астăвăр-ха, нумайăх пулмасӑ пур ĕҫҫыннисене те улталаса, тĕттĕмлĕхре тытса пуранна харам пырла нупсене, тиечуксене, псаломщиксене тăрантса, кашни йалах темĕн чухлĕ укҫа тăкаҫчĕ. Ҫак харам пырсем ачасем ҫуралсан та, ҫамрăксем авлансан та, чирлесен те, вилсен те тата тĕрлĕрен праҫниксенче килĕрен килле ҫӳресе укҫа, тырă, ҫăм, ҫăмарта пуҫтаратчĕҫ. Халĕ, пурлăхла пурнăҫ пуҫланнă вăхăтра кашни колхозах ҫестрана тытса усрама пултаратех.

Траххомпа кĕрешнĕ чухне, мĕн пур йалти вăй медицинă работникĕсемпе пĕрлешсе, вĕсене пулăшса ĕҫлемелле. Комуниссем, комсомолĕцсем, пионерсем хĕрарăм пайĕсем (женотдел), профсойуз членĕсем пурте траххомпа чирлĕ ĕҫхалăхне ҫак усал, хăрушă чиртен хăтарас ĕҫре активлăн хутшăнса ĕҫлесе, ăна суккăрлăхран хăтармаллах. Йалта пурнакан вĕреннĕ ҫынсем питĕ таса пурăнмалла, вĕсем колхозниксемшĕн примерлă пулмалла.

Кашни колхозрах тасалăхла пурăннăшĕн памалли преми фончĕсем уйăрса ху-

ас пулат. Çак премисене колхозра тумтир аврашне, çурт ăшчикне, мунчасене, апатсимĕçсене таса тытакансене, çемйери траххома тăрăшса тÿрлетекенсене парас пулат.

Колхозра пуринчен таса пурнакан çемйене куçса çурекен хĕрлĕ йалав памалла тăвас пулат.

Çапла, траххом йертекен мĕн пур тасамарлăха çине тăрса тытăнсах пĕтерес пулат. Колхозниксене (çавăн пекех колхозра маррисене те) çутта кăларса, колхоз урлă çĕнĕ пурнăç çулĕ çине кăларса сывлăхлă, пурлăхлă пурăнма вĕрентес пулат. Куљттурлă пурăнсан, траххома тÿрлетсе ытти сывă çынсене йересрен сыхлансан, çак тахçантан сыпăнса пыракан чире пĕтĕмпех пĕтерĕпĕр. Хитре, таса куçпа çуралакан вак халăхсен çамрăк ăрăвĕ хĕрелнĕ, пÿрленнĕ куçсемпе çÿремĕç, куçĕсене шур илнипе тĕк тухнипе суккăрланмĕç, пурнăç тăршшипех таса куçпа савăнса пурăнĕç.

## Траххома тĕп тăвассишĕн

Патша влаçĕнчен совет правиттĕлствин аллине революци хыççăн куçса йулнă куљттурлă наçледствă питĕ пĕчĕк. Пирĕн крайра

ёлёк аслă шкулсем çукчĕ те, вăтам шкулсенче улпутсен, пупсен, дворенсен, мешченсен, купцасен ачисем анчах вĕренетчĕç. Рабочисемпе хресченсем вађђи пĕчĕк шкулсем кăна пулнă. Çак шкулсенче турă çинчен, патшапа улпутсене, пупсене йепле пăхăнса, хисеплесе пурнасси çинчен анчах вĕрентетчĕç. Çавăнпа вак халăхсем пит тĕттĕме йулнă. Бођницасем питĕ сахалччĕ, пулсан та пысăк пасарлă йалсенче кăна пулнă, вак халăхлă йалсенче пулман та. Акă тĕслĕх: Чаллă-пуç районĕнче патша вăхăтĕнче те пĕр бођница, та, пĕр врач феђдшĕрпа амбулатори те çукчĕ. Клевлĕ районĕнче пĕр бођница кăна тата 1-мĕш сыпăклă шкулсенче вĕрентме учиттĕлсем хатĕрлесе кăларакан 2 класлă шкул пурччĕ.

Халĕ Чаллă-пуç районĕнче 5 тухтăр, 5 феђдшĕр амбулаторисем, пур чирпе те пăхакан бођница пĕрре, куç бођници, тата шкулсем—7 ШКМ-пе 2 техникум пур.

Вак халăхсене çутта кăларас ĕç кунран кун ўссе пынине, ытти примерсемпе кăтартмасан та, хамăрах пурнăçра курса тăратпăр. Совет правиттĕлстви чи малтан вак халăхсен хушшинче чылайрах шкулсем уçса бођницасем тăвас ĕçе те кайа хăвармасĕ, вĕсем

çултан çул ӳссе, йышлӑланса пыраççӗ. Вӑтам Атӑл крайӗ 1929-32-мӗш çулсенче вак халӑх районӗсенче 8 больница тунӑ, амбулаторисем 2 уçнӑ. Крайӗпе илсен 1928-мӗш çулта больницасенче чирлӗ çынсем вальльи 8900 выранччӗ, 1932-мӗш çулта—12800 вырӑн. Куç амбулаторийӗсем 1928-мӗш çулта 8 пулнӑ пулсан, 1932-мӗш çулта—14 çитнӗ.

Крайри сывлӑх пайӗ иккӗмӗш пилӗкçуллӑхра трахома тӗпӗпех пӗтерес тесе питӗ пысӑк план турӗ. Çав планпа 1933-мӗш çултан тытӑнса 1937-8 мӗш çула çитиччен Атӑлӑн сылтӑм йенче куç больницисемпе куç амбулаторийӗсем—52, йалсенче тӳрлетсе тӑма çестра пункчӗсем 841 уçмалла, куç больницисенче куç чирӗпе выртма 501 вырӑн уçмалла. Атӑл сулахай йенче больницасем амбулаторисем—42, çестра пункчӗсем—452, куç чирӗпе выртмалли вырӑнсем—367. Çак планпа иккӗмӗш пилӗкçуллӑх тулнӑ вӑхӑтра кашни районра куç тухтӑрӗ, куç больници пулмалла. Трахомпа асапланакан вак халӑх хушшинче кашни 300-500 трахомлӑ çын пуçне пӗр çестра пулмалла. Вӑл колхозсенче, йалсенче пурӑнса трахомран йепле сыхланмалли çинчен вӗрентсе трахомран емеллесе тӑмалла.

Тухтăрсемпе çестрасем хăйсем кăна уйрăм тăрăшсассăн ĕç малалла нумайах каяймĕ. Хăвăрах шухăшлăр-ха, больницасем çестрасем пулсан ĕçхалăхĕ хăй сывлăхĕшĕн хăй тăрăшмасан—тухтăрсемпе пĕрле ĕçлемесен ăçтан ĕç малалла кайĕ. Тухтăрсемпе çестрасене мĕн пур ĕççыннисемпе вĕсен культурлă вăйĕ пĕрлешсе пулăшса ĕçлесен тин куç тăшманне—траххома пĕтерме пулĕ. Кашни колхозрах траххомпа кĕрешекен общчĕствăсем организацилемелле. Траххомпа асапланакан çын куракан куçлă пултăр тесен, вăл хăй емеллесшĕн мар пулсан, ăна ирĕксĕр емеллеттерес пулаť, унсăрăн траххома епĕр татăклă çĕнтерейĕс çук.

Пур ĕççынни те тухтăрсемпе пĕрлешсе, вĕреннĕ çынсемпе пĕрле тăрăшса ĕçлесессĕн, епĕр траххома иккĕмĕш пилĕкçуллăхра тĕпĕ-тымарĕпех пĕтерĕпĕр.

Вара темиçе мĕлйун, пўрлĕ, хĕрлĕ куçсемпе çўрекен çынсене асапран хăтарăпăр, вĕсенчен ĕçе йурăхлă çынсем туса, вĕсене ытти колхозниксем пекех культурлă, çителĕклĕ пурлăхлă пурнăçпа пурăнма май парăпăр.

Цена 25 коп.

А. Захаров

# Трахома и борьба с ней

ОГИЗ
1934 Самара—Москва
Средневолжское краевое госиздательство